# MAIN

# ***M**ultilingual **A**ssessment **I**nstrument for **N**arratives*

N. Gagarina, D. Klop, S. Kunnari,
K. Tantele, T. Välimaa,
U. Bohnacker & J. Walters

**Chuvash version**

Translated and adapted by
Maria Dorbert & Alena Nikitina

(based on the revised version in English)

© ZAS Papers in Linguistics 64 (2020)

**How to cite this version**:
Gagarina, N., Klop, D., Kunnari, S., Tantele, K., Välimaa, T., Bohnacker, U. & Walters, J. (2019). MAIN: Multilingual Assessment Instrument for Narratives - Revised. Materials for use. *ZAS Papers in Linguistics*, 63. Chuvash version. Translated and adapted by Dorbert, M. & Nikitina, A.

## MAIN: Chuvash version

### Тĕрлĕ чĕлхеллĕ ачасен мĕн пĕлнин хăнăхăвĕсене терĕслемелли тест

Мария Дорберт (Maria Dorbert) & Алёна Никитина (Alena Nikitina)

Тĕрлĕ чĕлхеллĕ ачасен мĕн пĕлнин хăнăхăвĕсене терĕслемелли теста (ТОН; тест на определение нарративных навыков многоязычных детей) 2012 çулта çуралнăранпа е пĕчĕкренех пĕрре е темиçе чĕлхесемпе калаçакан ачасен пуплев хăнăхăвне хаклама хатĕрленĕ. ТОН 3 çултан пуçласа 10 çула яхăн ачасен пуплев пултарулăхне хаклама туса хатĕрленĕ. Нумаях пулмасть ăна аслă çулсенчи ачасен, çамрăксен тата аслисен калав пултарулăхнете хаклама усă курма май пуррине кăтартса панă. Тест экспрессивлă калаçу шайне тата калав пĕлтерĕшне ăнланнине хаклама май парать. Тест темиçе чĕлхепе ачан ăнлану тата калав хăнăху шайне хаклама май парать. ТОН 3 тĕрлĕ калав майне ӳкерсе кăтартнă: ӳкерчĕк тăрăх каласа пани, вуланине каласа пани тĕслĕх тăрăх калав хатĕрлени. 2012 çулта хатĕрленĕ тĕпчев ĕçĕ тарăн тишкерӳ çинче никĕсленсе тăрать: ăна пĕрре тата икĕ чĕлхеллĕ 3 çултан пуçласа 10 çула çитнĕ 500 ытла ачасем çинче тишкернĕ, 15 тĕрлĕ чĕлхе тата чĕлхе комбинацийĕ валли хатĕрленĕ.

Хальхи акăлчан версийĕ 2019 çулта анлă сарăлнă. Ăна 2500 ытла транскрипцилесе çырнă калав тата историсене ăнлантаракан 24000 яхăн хуравсем тăрăх хатĕрленĕ. Тĕпчев ĕçне хатĕрлес тесе 2013 çултан пуçласа 2019 çулччен Германире, Раççейре тата Швецире 700 пĕрре тата икĕ чĕлхеллĕ ачан пуплев хăнăхăвне тишкернĕ.

ТОН тăватă параллеллĕ истори пур, вĕсенчен кашни ултă ӳкерчĕкрен тăрать. Кашни историне калав тытăмĕ енчен тĕплĕн тĕпчесе, тишкерсе хатĕрленĕ. Истори сюжечĕсем когнитивлă тата чĕлхе кăткăслăхне, микроструктура тата микроструктура параллелĕхне шута илеççĕ, çавăн пекех культура вырнаçулăхне те тĕрĕслесе тăраççĕ.

ТОН йĕркене кĕмен пулин те, унăн тест тумалли йĕркине тĕрлĕ тĕллевсем валли, çав шутра наукăпа тĕпчев ĕçĕ валли те, усă курма пулать. ТОНпа мĕнле усă курмалли çинчен тĕплĕнрех «Справочнăй информаци, унпа мĕнле усă курмалла тата ытти чĕлхесем патне мĕнле хăнăхтармалла» сыпăкра паллашма пулать. Ăна «Лингвистика статйисем» (№ 63, 2019, IV-XII стр.) тĕпчев ĕçĕнче тупма пултаратăр (*"Background on MAIN Revised, how to use it and adapt it to other languages" ZAS Papers in Linguistics* 63 (2019, pp. IV-XII)). Ăна https://zaspil.leibniz-zas.de/issue/view/53 сайтра тупма пулать.

Документ тытăмĕ:

- Тест ирттермелли процедура сăнлавĕ
- Тестсен протоколĕсем тата хуравĕсем
- Ашшĕ-амăшĕ валли хатĕрленĕ анкета
- Историсен тексчĕсем

**Чăвашлатни**

**Теста ирттермелли процедура сăнлавĕ**

Теста чи малтанах 3-10 çулхи ачасен пуплевĕ мĕнле аталаннине тĕрĕслес тĕллевпе хатĕрленĕ, анчах тестпа аслăрах ачасене те, пысăккисене те тĕрĕслесе пăхма юрать. Çавăн пекех тестпа ачасен экспрессивлă калаçăвĕн шайне пĕлме, вĕсем текста мĕнле ăнланнине хаклама пулать. Тест 3 ăслайран тарать: ÿкерчĕк тăрăх калав туни, каласа пани тата тĕслĕхпе усă курса калав туни. Тест тухаканĕ мĕнле майпа тухассине хăй суйлать. Тест ачан хăнăхăвне тĕрлĕ чĕлхепе усă курса хаклама май парать. Теста ача хăш чĕлхене лайăхрах пĕлет, çавăнтан пуçлама юрать. Ик чĕлхеллĕ ачасене эпир икĕ чĕлхипе те тухма сĕнетпĕр, анчах та вĕсем хушшинче 4-7 кун хушши интервал пулмалла. Май килсен теста ирттерекенĕ урăх çын пулмалла.

<u>Материалсем</u>

- *Таватă истори. Кашни истори ултă умлă-хыçлă вырнаçнă ÿкерчĕкрен тăрать: «Кайăк чĕпписем», «Качака пÿтеккисем», «Кушак», «Йытă». Кашни историн 3 копи, кашни копин уйрăм папка.*
- *Каласа памалли тата калав тумалли историсен тексчĕсем. «Кайăк чĕпписем», «Качака пÿтеккисем», «Кушак», «Йытă».*
- *Кашни историпе 3-шер экземпляр хатĕрлемелле, тĕрлĕ тĕслĕ принтер витĕр кăлармалла, кашни истори уйрăм конвертра пулмалла-пурĕ 12 конверт.*
- *Диктофон;*
- *Тест протоколĕсем тата хурав листисем;*
- *Ашшĕ-амăшĕн анкети.*

<u>Инструкцисем</u>

**Материалсене мĕнле хатĕрлемелле**

1. Ÿкерчĕксене çак сайтран уçласа илмелле <u>www.leibniz-zas.de/en/service-transfer/main</u>
2. Принтерпа усă курса А4, тĕрлĕ тĕслĕ хут çинче 3 хутчен пичетлĕр, размер 9х9 см;
3. Тÿнтер енчен ÿкерчĕксене номерлемелле.
4. Ÿкерчĕксене варринчен касса кăлармалла.
5. Пĕчĕк ÿкерчĕксемпе усă курма юрамасть.



6. Кашни ÿкерчĕке уйрăм конверта хумалла. Мĕнле конвертра пĕр пек истории пулнине те палăртăр. Эсир тĕрлĕ тĕслĕ конвертпа е символпа усă курма пултаратăр.

**Теста ирттерни**

- Чи малтанах хăвăр тест протоколĕсемпе паллашнине шута илĕр. Диктофона çырса илме хатĕрлĕр. Çырса илме хатĕрленӳ тапхăрĕнчен пуçламалла та вĕçне çитиех, ыйту-хурава шута илсе, çырса илмелле.
- Хатĕрленӳ тапхăрĕнче ыйту панă чух хăвăран ĕçри опыт çине таянма пултаратăр. Хатĕрленӳ тапхăрĕн теп тĕллевĕ вăл ачапа контакт тупасси, ача çăмăл ыйтусене ăнланнине тĕрĕслесси. Эсир ачана çакăн йышши ыйтусем пама пултаратăр: *«Санăн чи лайăх юлташ кам? Эсĕ телевизор пăхма юрататăн-и? Сана тĕрлĕ историсем итлеме килĕшет-и?»*
- Эсир тестăн (калав туни) иккĕмĕш пайне ирттеретĕр пулсан хатĕрленӳ тапхăрĕ ирттерме кирлĕ мар. Тĕрлĕ сăлтава пула теста чарма тивсен, тепĕр кунне кăна ирттеретĕр пулсан, ачапа теста пуçличчен калаçни, урăх йышши ыйтусем пани вырăнлă.
- Теста пуçличчен 3 пĕр евĕрлĕ историллĕ конверстсем сĕтел çинче пулмаллине асра тытăр. (Ку вăл ачана теста ирттерекенĕ историсене пĕлмест теме май парать).
- Теста тест протоколĕсемпе килĕшӳллĕн кăна ирттермелле
- Тест тăршшĕпе эсир ачана хирĕç лармалла. Ӳкернине ачан кăна курмалла. Ача каласа памалли ӳкерчĕклĕ историне илсен ăна 1-6 ӳкерчĕксене пăхма ирĕк парăр. Ачана çапла калăр: *«Пур ӳкерчĕке те тимлĕ пăх, мана вара ан кăтарт. Сан кăна вĕсене курмалла».* Ача конверта уçаймасть пулсан ăна пулăшмалла. Ача ӳкерчĕксене пăхса пĕтерсен, калама хатĕр пулсан, ăна ӳкерчĕксене пуçтарса хума пулăшăр. Унтан 1-2 ӳкерчĕксем тăрăх каласа пама ыйтăр. Ача 1-2 ӳкерчĕксен историне каласа пĕтерсен ытти ӳкерчĕксене уçма сĕнмелле (3-4 ӳкерчĕксем), юлашкинчен 5-6 ӳкерчĕксене уçма пулăшмалла. Халĕ ĕнте 1-6 ӳкерчĕксем пурте куç умĕнче.
- Каласа пĕтерсен ачана унăн ăнлавне тĕрĕслеме ыйту парăр: *«Халĕ эпĕ сана çак истори тăрăх темиçе ыйту паратăп».* Ыйту панă чухне ӳкерчĕксем ачана та, тест ирттерекене те курăнмалла.
- Тест вĕçленсен протокол тултармалла, ачан экспрессивлă калаçăвне тата калава мĕнле ăнланнине хакламалла. Ачан кирек мĕнле тĕрĕс хуравне те пĕр баллпа хакламалла.

**Ăнлантару**

1. Ачана каласа пама ан пулăшăр / ача вырăнне историне каласа пама ан пуçлăр.. Ăна каласа пама ыйтăр. *«Мана истори каласа пар-ха, тарăхасшăн»* (ӳкерчĕк çине кăтартăр).
2. 10-çеккунт иртнĕ хыççăн, ача нимĕн те каламасть пулсан: *«Аван. Атьăр пуçлатпăр»*, - теме юрать. Ача çавах калаçмасан ӳкерчĕке кăтартса: *«Ку истори мĕн çинчен?»* - ыйтма пулать. Ача калаçу варринче шăплансан ăна ыйтусемпе пулăшăр: *«Малалла мĕн те пулин каласа пар-ха мана. Тата мĕн куратăн-ха?»*
3. Ача геройсене мĕнле чĕнни пысăк пĕлтерĕшлĕ мар, çавăнпа та ача калаçнă чух ăна чарма та, тӳрлетме те юрамасть. Ача кирлĕ сăмах тупаймасть, сирĕнтен пулăшу кĕтнĕ пек туйăнать пулсан ăна: *«Ку героя санăн мĕнле чĕнес килет, çапла чĕн»* е *«Санăн ăна мĕнле чĕнес килет?»* - тесе ыйтма пулать.
4. Çакăн йышши ыйтусем ан парăр:
   a) *«Кунта вăл мĕн тăвать?», «Кам чупать?»*
   b) *«Кам е мĕн ку?», «Кама е мĕне куратăн?»*
5. Ача хăйĕн опычĕпе: *«Эпĕ ку кайăка паян ирхине куртăм»* е *«Паян эпĕ аннепе лавккана каятăп»*, - терĕ пулсан ăна малалла калаçма ирĕк парăр. Кайран тин кăна ӳкерчĕк тăрăх каласа пама ыйтăр.
6. Эсир ачана: *«Маттур! Аван!»* - тесе хавхалантарма пултаратăр. (Кашни икĕ ӳкерчĕк тăрăх калав тунă хыççăн. Чăрмантарнине туятăр пулсан мухтама кирлĕ мар).

**Историсен результатне мĕнле танлаштармалла мĕнле танлаштармалла мар**

- Ик чĕлхеллĕ ачапа тест ирттернĕ чух «Кушак» е «Йытă» историпе пĕр чĕлхепе ирттерĕр. «Кайăк чĕпписем» тата «Качака пӳтеккисем» историпе тепĕр чĕлхепе ирттерĕр.
- Историсене тӳремĕн танлаштарма та, пĕр вăхăтра ирттерме те кирлĕ мар.
- Мĕншĕн? Çак 4 (тăватă) истори пĕр-пĕринчен уйрăлса тăрать, уйрăмах ыйтусемпе ăнлану енчен. «Кайăк чĕпписем» тата «Качака пӳтеккисем» хăш-пĕр параметрĕсем тăрăх пĕр пекрех . «Кушак» тата «Йытă» та пĕр пек, анчах сюжет тĕлĕшĕнчен, персонажсен хисепĕпе, ăнлава тĕрĕслеслемелли хăш-пĕр ыйтусемпе уйрăлса тараççĕ. Çавăнпа та хăвăр тӳремĕн танлаштарманнине асра тытăр.
- Ачасен ушкăнне ТОН тестпа тĕрĕсленĕ чух историсен витĕмлĕхĕ мĕнле те пулса сахалтарах пулмаллине асра тытăр. Историсен, тĕпчев тĕллевне кура, тест ирттерме май паракан йĕрке.

<u>*Историсене кăтартса памалли йĕрке чĕлхе тата истори тĕлĕшĕнчен вырăнлă та тĕрĕс пулмалла*</u>. (Чи малтан «Кушак», «Йытă», каласа пани, тĕслĕхлĕ калав; «Кайăк чĕпписем», «Качака пӳтеккисем» - чи малтан калав. Аяларах панă йĕркепе усă курăр. Пĕр чĕлхене кăна тĕрĕслетĕр пулсан историн çак йĕркипе усă курăр: 1,2,5,6 е 3,4,7,8.

| Ачан № | Чĕлхе | Тĕслĕх-калав-каласа пани | Калав | Чĕлхе | Тĕслĕх-калав-каласа пани | Чĕлхе |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | L1 | Кушак | Кайăк чĕпписем | L2 | Йытă | Качака пӳтеккисем |
| 2 | L1 | Кушак | Качака пӳтеккисем | L2 | Йытă | Кайăк чĕпписем |
| 3 | L2 | Кушак | Качака пӳтеккисем | L1 | Йытă | Кайăк чĕпписем |
| 4 | L2 | Кушак | Кайăк чĕпписем | L1 | Йытă | Качака пӳтеккисем |
| 5 | L1 | Йытă | Кайăк чĕпписем | L2 | Кушак | Качака пӳтеккисем |
| 6 | L1 | Йытă | Качака пӳтеккисем | L2 | Кушак | Кайăк чĕпписем |
| 7 | L2 | Йытă | Качака пӳтеккисем | L1 | Кушак | Кайăк чĕпписем |
| 8 | L2 | Йытă | Кайăк чĕпписем | L1 | Кушак | Качака пӳтеккисем |

L1 – килте усă куракан чĕлхе
L2 – халăх хушшинчи чĕлхе, тăван çĕр-шыв чĕлхи

Асăрхăр! Тĕрлĕ историсен результачĕсене тӳремĕн танлаштарма çук.

## «Кушак» калав протоколĕ

Калав тумалли / Каласа памалли / Тĕслĕхлĕ калав

| | |
|---|---|
| Ача ячĕ: | ______________________________ |
| Çуралнă кун: | ______________________________ |
| Тестланă кун: | ______________________________ |
| Тестланă ача çулĕ (уйăхсемпе кăтартмалла): | ______________________________ |
| Арлăх: | ______________________________ |
| Тĕрĕслевçĕ ячĕ: | ______________________________ |
| 2-мĕш чĕлхепе çыхăну (контакт) | |
| вăрăмăшĕ (уйăхсемпе кăтартмалла): | ______________________________ |
| Шкулчченхи ача-пăча учрежденине кĕнĕ кун: | ______________________________ |
| Шкулчченхи ача-пăча учреждени ячĕ: | ______________________________ |

Материалсене малтанах хатĕрлесе хумалла: диктофон, конвертсем (ăшĕнче ӳкерчĕксем). Тест пуçланиччен вĕсем сĕтел çинче выртмалла. Диктофон çине çырса илме хатĕрленӳ пайĕнченех пуçламалла та тест вĕçленичченех çырмалла.

**Хатĕрленӳ пайĕ**
Ачапа контакт тупăр. Унпала тĕрлĕ темăпа калаçма пултаратăр. Тĕслĕхрен: Санăн чи лайăх юлташ кам? Эсĕ телевизор курма юрататăн-и? Сана историсем каласа пама килĕшет-и? Сана историсем итлеме килĕшет-и?

**Инструкцисем**

**Калав тумалли**

Ачана хирĕç ларăр. Ăна çапла калăр: «Пăх-ха, сан умăнта 3 конверт выртать. Кашни конвертра пĕрер интереслĕ ӳкерчĕклĕ истории пур. Хăвна килĕшекен конверта суйласа ил, унтан мана историне каласа паратăн. Ун хыççăн эпе сана ыйтусем паратăп». Ача конверта суйласа илсен ăна конвертран ӳкерчĕксене кăларма пулăшăр, анчах та ӳкерчĕксен йĕркине ачан кăна курмалла. Халĕ ачана çапла калăр: «Тимлĕ пăх ӳкерчĕксене, мана вара ан кăтарт. Эсĕ кăна пăхма пултаратăн. Эсĕ хатĕр-и?»

Унтан ӳкерчĕксене майласа хумалла та 1-2 ӳкерчĕксене уçмалла. (Ачан кăна курмалла). Ачана: “Каласа пар-ха мана ӳкерчĕксен историне. Эсĕ мана чи лайăх истори каласа пама тăрăш”, - тесе калама пулать. Ачан каласа парас кăмăлĕ çук пулсан ăна хавхалантарăр. Ӳкерчĕк çине кăтартса: «Каласа пар-ха ӳкерчĕкри историне», - тейĕр. Ача 1-2 ӳкерчĕк тăрăх каласа панă хыççăн 3-4 (1-4 ӳкерчĕксем пурте курăнмалла), унтан 5-6 ӳкерчĕксене. (Халĕ 1-6 ӳкерчĕксем пурте курăнмалла). Ӳкерчĕксене ачан кăна курмалли çинчен манмалла мар. Каласа панă çĕртех ача шăплансан ăна: «Малалла. Ытларах каласа пар-ха. Тата мĕн пулса иртет-ха ӳкерчĕкре».

Ача пĕтĕмпех каласа петерсен ăна мухтамалли çинчен ан манăр. Ун хыççăн ыйтусем пама юрать.

**Каласа памалли**

*Ачана хирĕç ларăр. Ăна çапла калăр: «Пăх-ха, сан умăнта 3 конверт выртать. Кашни конвертра пĕрер интереслĕ ӳкерчĕклĕ истории пур. Хăвна килĕшекен*

*конверта суйласа ил, унтан эпĕ сана истори каласа паратăп». Ача конверта суйласа илсен унтан ÿкерчĕклĕ историсене кăларăр та ача умне хурăр. (Ӳкерчĕксен йĕркине ачан кăна курмалла). Халĕ ачана çапла калăр: «Тимлĕ пăх ÿкерчĕксене, мана вара ан кăтарт. Эсĕ кăна пăхма пултаратан. Эсĕ хатĕр-и? Халĕ эпĕ сана истории каласа паратăп. Эсĕ тимлĕ итле, вара мана каласа паратан. Ун хыççăн эпĕ сана темиçе ыйту паратăп». Ӳкерчĕксене майласа хурăр та 1-2 ÿкерчĕксене уçăр. Ӳкерчĕксене ачан кăна курмалла. Пĕрремĕш ÿкерчĕк çине кăтартăр та çапла калăр: «Çакăнтан пуçланать истори».*

*Пĕррехинче вылякан кушак тĕм çинче ларакан сарă лĕпĕше курчĕ. Вăл ăна тытас тесе çӳлелле сикрĕ. Çав вăхăтра хавасла арçын ача пулăçăран таврăннă, вăл витрепе мечĕк тытса пынă. Вăл лĕпĕш хыççăн хăвалакан кушака асăрхарĕ.*

*3-4 ÿкерчĕксене уçăр. Ачан кăна курмалла. (1-4 ÿкерчĕксем пурте курăнмалла)*

*Лĕпĕш хăвăрт вĕçсе кайрĕ те, кушак тĕмĕсем хушшине ӳкрĕ. Кушак аманнă пирки питĕ çилленсе кайрĕ. Арçын ача тĕлĕнсех кайрĕ, çав вăхăтра ун аллинчен мечĕкĕ тухса ӳкрĕ. Мечĕк шыва йăваннине курсан ача кăшкăрса ячĕ: "Çук, манăн мечĕк ишсе каять!" Ача кăмăлсăрланчĕ, вăл мечĕкне шывран кăларасшăн пулчĕ. Çав вăхăтра кушак ача витрине асăрхарĕ те: "Манăн пулă тытас килет", - тесе шухăшларĕ.*

*5-6 ÿкерчĕксене уçăр. Ачан кăна курмалла. (1-6 ÿкерчĕксем пурте курăнмалла)*

*Çав вăхăтрах арçын ача хăйĕн мечĕкне шывран вăлтапа кăларма тытăнчĕ. Вăл кушак унăн пуллине тытнине асăрхамарĕ те. Кушак çавăн пек тутлă пулла çинишĕн савăнчĕ, арçын ача вара мечĕкне каялла тавăрнишĕн питĕ савăнчĕ.*

*Истори вĕçĕ*

*Унтан ÿкерчĕксене майласа хурăр ,вара каллех 1-2 ÿкерчĕксене уçăр. (Ӳкерчĕксене ачан кăна курмалла) Ачана: «Халĕ эпĕ сана истори каласа пама ыйтасшăн. Чи лайăх истории каласа пама тăрăш-ха», - калама пулать. Ачан истори каласа парас кăмăл çук пулсан ăна хавхалантарăр та çапла калăр ÿкерчĕксем çине кăтартса: «Ӳкерчĕксем тăрăх истори каласа пама тытăнса пăх». Ача икĕ ÿкерчĕк тăрăх каласа пĕтерсен тепĕр иккĕшне, унтан юлашкисене уçса парăр. 1-6 ÿкерчĕксем пурте курăнмалла (ÿкерчĕксене ачан кăна курмалла).*

*Ача каланă чухнех чарăнсан: «Малалла. Ытларах каласа пар-ха. Тата мĕн пулса иртет-ха ÿкерчĕкре», - теме пултаратăр. Ачана историне каласа пĕтерни çинчен пĕлтермелли çинчен асăрхаттарăр.*

*Историне каласа пĕтерсен ачана мухтамалли çинчен ан манăр, вара тин ыйтусем пама пултаратăр*

**Тĕслĕхлĕ калав**

*Ачана хирĕç ларăр. Ăна çапла калăр: «Пăх-ха, сан умăнта 3 конверт выртать. Кашни конвертра пĕрер интереслĕ ÿкерчĕклĕ истории пур. Хăвна килĕшекен конверта суйласа ил, унтан эпĕ сана истори каласа паратăп». Ача конверта суйласа илсен унтан ÿкерчĕклĕ историсене кăларăр та ача умне хурăр. (Ӳкерчĕксен йĕркине ачан кăна курмалла). Халĕ ачана çапла калăр: "Тимлĕ пăх ÿкерчĕксене, мана вара ан кăтарт. Эсĕ кăна пăхма пултаратан. Эсĕ хатĕр-и?" Халĕ эпĕ сана истории каласа паратăп. Эсĕ тимлĕ итле, вара мана каласа паратан. Ун хыççăн эпĕ сана темиçе ыйту паратăп. Ӳкерчĕксене майласа хурăр та 1-2 ÿкерчĕксене уçăр. Ӳкерчĕксене ачан кăна курмалла. Пĕрремĕш ÿкерчĕк çине кăтартăр та çапла калăр: «Çакăнтан пуçланать истори».*

*Пĕррехинче вылякан кушак тĕм çинче ларакан сарă лĕпĕше курчĕ. Вăл ăна тытас тесе çӳлелле сикрĕ. Çав вăхăтра хаваслă арçын ача пулăçăран таврăннă, вăл витрепе мечĕк тытса пынă. Вăл лĕпĕш хыççăн хăвалакан кушака асăрхарĕ.*

*3-4 ӳкерчĕксене уçăр. Ачан кăна курмалла. (1-4 ӳкерчĕксем пурте курăнмалла)*

*Лĕпĕш хăвăрт вĕçсе кайрĕ те, кушак тĕмĕсем хушшине ӳкрĕ. Кушак аманнă пирки питĕ çилленсе кайрĕ. Арçын ача тĕлĕнсех кайрĕ, çав вăхăтра ун аллинчен мечĕкĕ тухса ӳкрĕ. Мечĕк шыва йăваннине курсан ача кăшкăрса ячĕ: "Çук, манăн мечĕк ишсе каять!" Ача кăмăлсăрланчĕ, вăл мечĕкне шывран кăларасшăн пулчĕ. Çав вăхăтра кушак ача витрине асăрхарĕ те: "Манăн пулă тытас килет", - тесе шухăшларĕ.*

*5-6 ӳкерчĕксене уçăр. Ачан кăна курмалла. (1-6 ӳкерчĕксем пурте курăнмалла)*

*Çав вăхăтрах арçын ача хăйĕн мечĕкне шывран вăлтапа кăларма тытăнчĕ. Вăл кушак унăн пуллине тытнине асăрхамарĕ те. Кушак çавăн пек тутлă пулла çинишĕн савăнчĕ, арçын ача вара мечĕкне каялла тавăрнишĕн питĕ савăнчĕ.*

*Истори вĕçĕ*

Ача пĕтĕмпех каласа петерсен ăна мухтамалли çинчен ан манăр. Ун хыççăн ыйтусем пама юрать.

**«Кушак» калава тишкермелли протокол**

**1-мĕш пай: Продукци**

А: Калав тытăмĕ; В: Калав кăткăслăхĕн степенĕ;

С: Психикăлла лару-тăрăвне кăтартни (ПК)

**А: Калав тытăмĕ**

| | | **Тĕрĕс хурав тĕслĕхĕсем**[1] | **Балл** |
|---|---|---|---|
| **А1.** | Кӳртĕм пай | Вăхăта тата/е вырăна палăртни, сăмахран, тахçан-тахçан / пĕррехинче/ пĕррехинче / ĕлĕк; кӳлĕ хĕрринче/ çыранра / шыв хĕрринче/ улăхра/ уçланкăра | 0 1 2[2] |
| *1-мĕш эпизод: Кушак (эпизод геройĕсем: кушак тата лĕпĕш)* | | | |
| **А2.** | ПК: ĕçсем мĕнле пуçланса кайнине хаклани | **Кушак** вылясшăн пулнă; кушакшăн интереслĕ/кăсăк пулнă / **Кушак** лĕпĕш курнă | 0 1 |
| **А3.** | Тĕллев | **Кушак** лĕпĕш тытасшăн/ хăваласа ярасшăн/ лĕпĕшпе вылясшăн **Кушак +** ГЛАГОЛ (тытасшăн, тупасшăн, лĕпĕшпе вылясшăн) | 0 1 |
| **А4.** | Хăтлану | **Кушак** малалла/ çӳлелле сикнĕ **Кушак** лĕпĕш хыççăн хăваланă; лĕпĕше хăваласа янă **Кушак** лĕпĕше + ГЛАГОЛ (тытас, тупас, ярса тытас) тесе аппаланать. | 0 1 |
| **А5.** | Ĕç мĕнле вĕçленсе пĕтни / результат | **Кушак** тĕмсем хушшине ӳкрĕ / лĕпĕш тытаймарĕ/ лĕпĕш тытма ĕлкĕреймерĕ **Лĕпĕш** çăлăннă/ тарнă/ вĕçсе кайнă/ вĕçсе кайма пултарнă / вĕçсе кайма ĕлкĕрнĕ | 0 1 |
| **А6.** | ПК: реакци хаклани | **Кушак** тарăхса кайнă/ çилленнĕ / кӳренсе кайнă **Лĕпĕш** телейлĕ / хавас | 0 1 |
| *2-мĕш эпизод: Арçын ача (эпизод геройĕ: арçын ача)* | | | |
| **А7.** | ПК: ĕçсем мĕнле пуçланса кайнине хаклани | **Арçын ача** салху/ телейсĕр / хăйĕн мечĕкĕшĕн пăшăрханнă **Арçын ача** мечĕке шывра курчĕ | 0 1 |
| **А8.** | Тĕллев | **Арçын ача** мечĕкне тавăрасшăн пулчĕ/ **Арçын ача** + ГЛАГОЛ (илес, шывран кăларас) тет | 0 1 |
| **А9.** | Хăтлану | **Арçын ача** мечĕке шывран туртса кăларма хăтланать/ кăларать/ сĕтĕрсе пăхать/ | 0 1 |
| **А10.** | Ĕç мĕнле вĕçленсе пĕтни / результат | **Арçын ача** мечĕкне каялла тавăрать/ шывран туртса кăларать / мечĕке çăлать | 0 1 |

[1] Иккĕленнĕ чухне е ача хуравĕ протоколра кăтартнă хурав варианчĕ пек мар пулсан, акăлчан чĕлхипе çырнă инструкцине пăхăр.

[2] Ноль балл тĕрĕс мар хурав панăшăн е ответ çукшăн лартмалла, 1 балл кашни тĕрĕс хуравшăн памалла, 2 балл вăхăтпа вырăн асăннăшăн памалла.

| | | | |
|---|---|---|---|
| **А11.** | ПК: реакци хаклани | **Арҫын ача** хавас/ телейлĕ/ хĕпĕртерĕ / мечĕкне тупнăшăн хĕпĕртерĕ | 0 1 |
| *3-мĕш эпизод: Кушак (эпизод геройĕ: кушак)* | | | |
| **А12.** | ПК: ĕҫсем мĕнле пуҫланса кайнине хаклани | **Кушак** выҫă/ кăсăклă / пулăпа кăсăкланнă<br>**Кушак** пулă асăрханă / пулă курнă | 0 1 |
| **А13.** | Тĕллев | **Кушак** пулă ярса илесшĕн/ ҫиесшĕн/ вăрласшăн пулчĕ<br>**Кушакăн** + ГЛАГОЛ (ҫиес, илес) килет | 0 1 |
| **А14.** | Хăтлану | **Кушак** пулă тытас/ илес/ вăрлас / ҫитес/ витререн тытас тесе туртăнать<br>**Кушак** + ГЛАГОЛ (тытас/ вăрлас) тесе хăтланнă | 0 1 |
| **А15.** | Ĕҫ мĕнле вĕҫленсе пĕтни / результат | **Кушак** пулă ҫисе янă/ тытнă | 0 1 |
| **А16.** | ПК: реакци хаклани | **Кушак** кăмăллă/ хавас/ телейлĕ / урăх выҫă мар | 0 1 |
| **А17.** | | **Пĕтĕмĕшле балл:** | |

## В. Калав кăткăслăхне хаклани

| «Хăтлану + результат» модельпе каланă секвенцисен хисепĕ | Тĕллевсен шучĕ (хăтланупа результата шута илмесĕр) | «Тĕллев + хăтлану» тата «Тĕллев +результат» модельпе каланă секвенцисен хисепĕ | «Тĕллев + хăтлану + результат» модельпе каланă секвенцисен хисепĕ |
|---|---|---|---|
| В1. | В2. | В3. | В4. |
| | | | |

## С. Психикăлла лару-тăрăвне кăтартни (ПК)

| | |
|---|---|
| С1. | Пĕтĕмĕшле ПК (сăмах çаврăнăшĕсем). ПК йышне кĕреççĕ:<br>**Туйăмсене каласа кăтартни:** сăмахран, курать, илтет, туять, шăршлать;<br>**Физиологи тăрăмĕн терминĕсем**: сăмахран, ĕçес килет, выçă, ывăннă, ыратса кайнă, ыратать;<br>**Тăн-пуç çинчен каласа пани:** сăмахран, вăранать, çывăрасшăн, çывăрман тата ытти те;<br>**Туйăмсене ӳкерсе кăтартни**: тĕслĕхрен, салху, телейлĕ, савăнăçлă, çилĕллĕ, пăлханса ӳкнĕ, шанăçне çухатнă, хăранă, мăнаçлă, хăюллă, хĕпĕртенĕ, тĕлĕннĕ;<br>**Тăн-пуç ĕçне кăтартакан глаголсем**: тĕслĕхрен, шухăшлать, пĕлет, манать, йышăнать, ĕненет, хăйĕнчен ыйтать;<br>**Сăмах глаголĕсем**: тĕслĕхрен, калаçать, чĕнет, кăшкăрать, асăрхаттарать, ыйтать. |

## 2-мĕш пай: Ăнлану

| | | Тĕрĕс хурав тĕслĕхĕсем | Тĕрĕс мар хуравсен тĕслĕхĕсем | Балл |
|---|---|---|---|---|
| **0** | Çак истори сана килĕшрĕ-и? | **Шутланман ыйту, балл лартма кирлĕ мар** | | |
| **D1.** | Мĕншĕн кушак сикет / малалла сикет? *(1-2 ўкерчĕксем çине кăтартăр)* (1- мĕш эпизод: Тĕллев) | Лĕпĕш тытасшăн/ лĕпĕшпе вылясшăн | Чупасшăн/ сикесшĕн Кушаксем яланах сикеççĕ / чупаççĕ | 0 1 |
| **D2.** | Кушак хăйне мĕнле туять? *(3 ўкерчĕк çине кăтартăр)* (ПК: реакци хаклани) | Усал / япăх / кўренчĕк / ыратнине сисет / лайăх мар / кансĕр | Лайăх/ телейлĕ | 0 1 |
| **D3.** | *(Ача ăнлантарса памасăрах тĕрĕс хурав парать пулсан çеç D3 ыйтăр. Ача D2 ыйтăва тĕрĕс ăнлантарса панă пулсан, D3 графара ăна Пĕр балл лартăр та D4 ыйту çине куçăр).* Мĕншĕн кушак хăйне япăх туять/ кўреннĕ/ тесе шутлатăн?[3] | Лĕпĕш тытма пултарайман / Тĕмсем хушшине ўкрĕ/ Кушак йĕплĕ тĕме тирĕнчĕ / Лĕпĕш вĕçсе кайрĕ | Вырăнсăр хурав | 0 1 |
| **D4.** | Мĕншĕн арçын ача вăлтана шыва антарать? *(5-мĕш ўкерчĕк çине кăтартăр)* (2-мĕш эпизод: Тĕллев) | Мечĕкне тытасшăн/ туртса кăларасшăн | Шывра вылясшăн | 0 1 |
| **D5.** | Ача хăйне мĕнле туять? *(5-мĕш ўкерчĕк çине кăтартăр)* (ПК: реакци хаклани) | Аван/ телейлĕ / кăмăллă | Начар/ усал/ салху | 0 1 |
| **D6.** | *(Ача ăнлантарса памасăрах тĕрĕс хурав парсан кăна D6 ыйтăр. Ача D5 ыйтăва тĕрĕс ăнлантарса панă пулсан, D6 графара ăна пĕр балл лартăр та D7 ыйту çине куçăр).* Мĕншĕн ача хăйне лайăх / хавас/ кăмăллă туять тесе шутлатăн?[4] | Мечĕке каялла илме пултарнă | Вăл кулать / Урăх вырăнсăр хурав | 0 1 |
| **D7.** | Кушак пулă мĕншĕн тытайрать? *(5-мĕш ўкерчĕк çине кăтартăр)* (3- мĕш эпизод: Тĕллев) | Çиес шут тытать/ çиес / вăрлас килет / пулă тытас килет Ача пăхманнипе усă курать Лĕпĕш тытма пултарайман | Пулăпа выляс килет | 0 1 |

[3] D3 ыйту панă чухне D2 хуравланă сăмах çаврăнăшĕсемпе усă курăр.
[4] D6 ыйту панă чухне D5 хуравланă сăмах çаврăнăшĕсемпе усă курăр.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | Кушаксем пулă юратаççĕ (пĕтĕмĕшле пĕлтерĕш)<br>Пулă тутлă | | |
| **D8.** | Калăпăр, ача кушака курать. Ача хăйне мĕнле туять? *(6-мĕш ÿкерчĕк çине кăтартăр)* (ПК: реакци хаклани) | Начар / усал / салху | Аван / телейлĕ / кăмăллă / савăнать | 0 1 |
| **D9.** | *(Ача ăнлантарса памасăр тĕрĕс хурав парать пулсан çеç D9 ыйтăр. Ачи D8 ыйтăва тĕрĕс ăнлантарса панă пулсан, D9 графра ăна пĕр балл лартăр та D10 ыйту çине куçăр).* Мĕншĕн эсĕ ача хăйне япăх туять тесе шутлатăн?[5] | Кушак пуллине çисе янă<br>Ача пуллине хăй çисе ярасшăн пулнă<br>Вăл ача пулли пулнă | Вăлта çĕр çинче выртать<br><br>Урăх вырăнсăр хурав | 0 1 |
| **D10.** | Ача кушакпа туслашĕ-ши? Мĕншĕн? | Çук (пĕр сăлтавне те пулин кăтартăр: тĕслĕхрен, кушак пулă çисе янă е пулă вăрланă)<br>Ытти майлă хурав | Çапла / Эпĕ пĕлместĕп / Урăх вырăнсăр хурав | 0 1 |
| **D11.** | **Пĕтĕмĕшле балл:** | | | |

[5] D9 ыйту панă чухне D8 хуравланă сăмах çаврăнăшĕсемпе усă курăр.

**«Йытă» калав протоколĕ**

Калав тумалли / Каласа памалли / Тĕслĕхлĕ калав

| | |
|---|---|
| Ача ячĕ: | ______________________________ |
| Çуралнă кун: | ______________________________ |
| Тестланă кун: | ______________________________ |
| Тестланă ача çулĕ (уйăхсемпе кăтартмалла): | ______________________________ |
| Арлăх: | ______________________________ |
| Тĕрĕслевçĕ ячĕ: | ______________________________ |
| 2-мĕш чĕлхепе çыхăну (контакт) | |
| вăрăмăшĕ (уйăхсемпе кăтартмалла): | ______________________________ |
| Шкулчченхи ача-пăча учрежденине кĕнĕ кун: | ______________________________ |
| Шкулчченхи ача-пăча учреждени ячĕ: | ______________________________ |

Материалсене малтанах хатĕрлесе хумалла: диктофон, конвертсем (ăшĕнче ӳкерчĕксем). Тест пуçланиччен вĕсем сĕтел çинче выртмалла. Диктофон çине çырса илме хатĕрленӳ пайĕнченех пуçламалла та тест вĕçлениччен çырмалла.

**Хатĕрленӳ пайĕ**
Ачапа контакт тупăр. Унпала тĕрлĕ темăпа калаçма пултаратăр. Тĕслĕхрен: *«Санăн чи лайăх юлташ кам? Эсĕ телевизор курма юрататăн-и? Сана историсем каласа пама килĕшет-и? Сана историсем итлеме килĕшет-и?»*

**Инструкцисем**

**Калав тумалли**

Ачана хирĕç ларăр. Ăна çапла калăр: *«Пăх-ха, сан умăнта 3 конверт выртать. Кашни конвертра пĕрер интереслĕ ӳкерчĕклĕ истории пур. Хăвна килĕшекен конверта суйласа ил, унтан мана историне каласа паратăн. Ун хыççăн эпе сана ыйтусем паратăп»*. Ача конверта суйласа илсен ăна конвертран ӳкерчĕксене кăларма пулăшăр, анчах та ӳкерчĕксен йĕркине ачан кăна курмалла. Халĕ ачана çапла калăр: *«Тимлĕ пăх ӳкерчĕксене, мана вара ан кăтарт. Эсĕ кăна пăхма пултаратăн. Эсĕ хатĕр-и?»*

Унтан ӳкерчĕксене майласа хумалла та 1-2 ӳкерчĕксене уçмалла. (Ачан кăна курмалла). Ачана: *«Каласа пар-ха мана ӳкерчĕксен историне. Эсĕ мана чи лайăх истори каласа пама тăрăш»*, - тесе калама пулать. Ачан каласа парас кăмăлĕ çук пулсан ăна хавхалантарăр. Ӳкерчĕк çине кăтартса: «Каласа пар-ха ӳкерчĕкри историне», - тейĕр. Ача 1-2 ӳкерчĕк тăрăх каласа панă хыççăн 3-4 (1-4 ӳкерчĕксем пурте курăнмалла), унтан 5-6 ӳкерчĕксене. (Халĕ 1-6 ӳкерчĕксем пурте курăнмалла). Ӳкерчĕксене ачан кăна курмалли çинчен манмалла мар. Каласа панă çĕртех ача шăплансан ăна: *«Малалла. Ытларах каласа пар-ха. Тата мĕн пулса иртет-ха ӳкерчĕкре»*, - калама пулать.

Ача пĕтĕмпех каласа петерсен ăна мухтамалли çинчен ан манăр. Ун хыççăн ыйтусем пама юрать.

**Каласа памалли**

*Ачана хирĕç ларăр. Ăна çапла калăр: «Пăх-ха, сан умăнта 3 конверт выртать. Кашни конвертра пĕрер интереслĕ ӳкерчĕклĕ истории пур. Хăвна килĕшекен*

*конверта суйласа ил, унтан эпӗ сана истори каласа паратӑп». Ача конверта суйласа илсен унтан ӳкерчӗклӗ историсене кӑларӑр та ача умне хурӑр. (Ӳкерчӗксен йӗркине ачан кӑна курмалла). Халӗ ачана ҫапла калӑр: «Тимлӗ пӑх ӳкерчӗксене, мана вара ан кӑтарт. Эсӗ кӑна пӑхма пултаратан. Эсӗ хатӗр-и?. Халӗ эпӗ сана истории каласа паратӑп. Эсӗ тимлӗ итле, вара мана каласа паратан. Ун хыҫҫӑн эпӗ сана темиҫе ыйту паратӑп». Ӳкерчӗксене майласа хурӑр та 1-2 ӳкерчӗксене уҫӑр. Ӳкерчӗксене ачан кӑна курмалла. Пӗрремӗш ӳкерчӗк ҫине кӑтартӑр та ҫапла калӑр: «Ҫакӑнтан пуҫланать истори».*

*Пӗррехинче йытӑ вылянӑ чухне йывӑҫ патӗнче шӑши ларнине курчӗ. Вӑл шӑши тытас тесе малалла сикрӗ. Ҫав вӑхӑтра хаваслӑ арҫын ача магазинтан таврӑннӑ, вӑл аллине хутаҫ тата сывлӑш шарикӗ тытса пынӑ. Ача шӑши хыҫҫӑн хӑвалакан йытта асӑрхарӗ.*

*3-4 ӳкерчӗксене уҫӑр. Ачан кӑна курмалла. (1-4 ӳкерчӗксем пурте курӑнмалла)*

*Шӑши хӑвӑрт чупса кайрӗ те, йытӑ йывӑҫа ҫапӑнчӗ. Вӑл аманнӑ пирки питӗ ҫилленчӗ. Арҫын ача ҫав тери хумханса кайнипе сывлӑш шарикӗ ун аллинчен шуса тухрӗ. Вӑл хӑйӗн сывлӑш шарӗ йывӑҫ ҫине вӗҫнине курсан: "Ав вӗҫет ман сывлӑш шарӗ!" – тесе кӑшкӑрса ярчӗ. Ача питӗ салху пулчӗ, вӑл ҫав сывлӑш шарикне каялла тавӑрасшӑн пулчӗ. Ҫав вӑхӑтра йытӑ ача сумкине асӑрхарӗ те: "Манӑн кӑлпасси ҫиес килет", - тесе шухӑшларӗ.*

*5-6 ӳкерчӗксене уҫӑр. Ачан кӑна курмалла. (1-6 ӳкерчӗксем пурте курӑнмалла)*

*Ҫав вӑхӑтрах арҫын ача хӑйӗн сывлӑш шарикне йывӑҫ ҫинчен туртса антарма тытӑнчӗ. Вӑл йытӑ унӑн кӑлпассине ярса илнине те сисмерӗ. Йытӑ ҫав тери тутлӑ кӑлпасси ҫинишӗн питӗ савӑнчӗ, арҫын ача вара хӑйӗн сывлӑш шарикне каялла тавӑрнишӗн хавас пулчӗ.*

*Истори вӗҫӗ.*

*Унтан ӳкерчӗксене майласа хурӑр, вара каллех 1-2 ӳкерчӗксене уҫӑр. (Ӳкерчӗксене ачан кӑна курмалла). Ачана ҫапла калӑр: «Халӗ эпӗ сана истори каласа пама ыйтасшӑн. Чи лайӑх истории каласа пама тӑрӑш-ха». Ачан истори каласа парас кӑмӑл ҫук пулсан ӑна хавхалантарӑр та ҫапла калӑр ӳкерчӗксем ҫине кӑтартса: «Ӳкерчӗксем тӑрӑх истори каласа пама тытӑнса пӑх». Ача икӗ ӳкерчӗк тӑрӑх каласа пӗтерсен тепӗр иккӗшне, унтан юлашкисене уҫса парӑр. 1-6 ӳкерчӗксем пурте курӑнмалла (ӳкерчӗксене ачан кӑна курмалла).*

*Ача каланӑ чухнех чарӑнсан: «Малалла. Ытларах каласа пар-ха. Тата мӗн пулса иртет-ха ӳкерчӗкре», - теме пултаратӑр. Ачана историне каласа пӗтерни ҫинчен пӗлтермелли ҫинчен асӑрхаттарӑр.*

*Историне каласа пӗтерсен ачана мухтамалли ҫинчен ан манӑр, вара тин ыйтусем пама пултаратӑр*

**Тӗслӗхлӗ калав**

*Ачана хирӗҫ ларӑр. Ӑна ҫапла калӑр: «Пӑх-ха, сан умӑнта 3 конверт выртать. Кашни конвертра пӗрер интереслӗ ӳкерчӗклӗ истории пур. Хӑвна килӗшекен конверта суйласа ил, унтан эпӗ сана истори каласа паратӑп». Ача конверта суйласа илсен унтан ӳкерчӗклӗ историсене кӑларӑр та ача умне хурӑр. (Ӳкерчӗксен йӗркине ачан кӑна курмалла). Халӗ ачана ҫапла калӑр: "Тимлӗ пӑх ӳкерчӗксене, мана вара ан кӑтарт. Эсӗ кӑна пӑхма пултаратан. Эсӗ хатӗр-и? Халӗ эпӗ сана истории каласа паратӑп. Эсӗ тимлӗ итле, вара мана каласа паратан. Ун хыҫҫӑн эпӗ сана темиҫе ыйту паратӑп". Ӳкерчӗксене майласа хурӑр та 1-2 ӳкерчӗксене уҫӑр. Ӳкерчӗксене ачан кӑна курмалла. Пӗрремӗш ӳкерчӗк ҫине кӑтартӑр та ҫапла калӑр: «Ҫакӑнтан пуҫланать истори».*

*Пĕррехинче йытă вылянă чухне йывăç патĕнче шăши ларнине курчĕ. Вăл шăши тытас тесе малалла сикрĕ. Çав вăхăтра хаваслă арçын ача магазинтан таврăннă, вăл аллине хутаç тата сывлăш шарикĕ тытса пынă. Ача шăши хыççăн хăвалакан йытта асăрхарĕ.*

*3-4 ӳкерчĕксене уçăр. Ачан кăна курмалла. (1-4 ӳкерчĕксем пурте курăнмалла)*

*Шăши хăвăрт чупса кайрĕ те, йытă йывăçа çапăнчĕ. Вăл аманнă пирки питĕ çилленчĕ. Арçын ача çав тери хумханса кайнипе сывлăш шарикĕ ун аллинчен шуса тухрĕ. Вăл хăйĕн сывлăш шарĕ йывăçалла вĕçнине курсан: “Ав вĕçет ман сывлăш шарĕ!” – тесе кăшкăрса ярчĕ. Ача питĕ салху пулчĕ, вăл çав сывлăш шарикне каялла тавăрасшăн пулчĕ. Çав вăхăтра йытă ача сумкине асăрхарĕ те: “Манăн кăлпасси çиес килет”, - тесе шухăшларĕ.*

*5-6 ӳкерчĕксене уçăр. Ачан кăна курмалла. (1-6 ӳкерчĕксем пурте курăнмалла)*

*Çав вăхăтрах арçын ача хăйĕн сывлăш шарикне йывăç çинчен туртса антарма тытăнчĕ. Вăл йытă унăн кăлпассине ярса илнине те сисмерĕ. Йытă çав тери тутлă кăлпасси çинишĕн питĕ савăнчĕ, арçын ача вара хăйĕн сывлăш шарикне каялла тавăрнишĕн хавас пулчĕ.*

*Истори вĕçĕ.*

Ача пĕтĕмпех каласа петерсен ăна мухтамалли çинчен ан манăр. Ун хыççăн ыйтусем пама юрать.

**«Йытă» калава тишкермелли протокол**

**1-мĕш пай: Продукци**

А: Калав тытăмĕ; В: Калав кăткăслăхĕн степенĕ;

С: Психикăлла лару-тăрăвне кăтартни (ПК)

## А: Калав тытăмĕ

| | | **Тĕрĕс хурав тĕслĕхĕсем**[6] | **Баллсем** |
|---|---|---|---|
| **А1.** | Кӳртĕм пай | Вăхăта тата/е вырăна палăртни, сăмахран, тахçан-тахçан / пĕррехинче/ пĕррехинче / ĕлĕк; … вăрманта/ паркра/ улăхра/ уйра/ йывăç патĕнче/ çул хĕрринче | 0 1 2[7] |
| *1-мĕш эпизод: Йытă (эпизод геройĕсем: йытă тата шăши)* | | | |
| **А2.** | ПК: ĕçсем мĕнле пуçланса кайнине хаклани | **Йытă** вылять/ кăсăклă пулса каfive<br><br>**Йытă** шăши курчĕ | 0 1 |
| **А3.** | Тĕллев | **Йытă** шăши хыççăн хăвалать/ шăшипе вылясшăн. | 0 1 |
| **А4.** | Хăтлану | **Йытă** малалла сикрĕ/ ыткăнчĕ<br>**Йытă** хăвалама/ йĕрлеме пуçларĕ<br>**Йытă** ярса тытасшăн ыткăнчĕ | 0 1 |
| **А5.** | Ĕç мĕнле вĕçленсе пĕтни (результат) | **Йытă** пуçпе çапăнчĕ / йывăçа çапăнчĕ / шăши тытаймарĕ<br>**Шăши** чупса кайрĕ / йывăç хыçне чупса кайрĕ / шăши питĕ хăвăрт пулчĕ | 0 1 |
| **А6.** | ПК: реакци хаклани | **Йыттă** кӳренсе кайрĕ<br>**Шăши** телейлĕ пулчĕ/ савăнчĕ | 0 1 |
| *2-мĕш эпизод: Арçын ача (эпизод геройĕ: арçын ача)* | | | |
| **А7.** | ПК: ĕçсем мĕнле пуçланса кайнине хаклани | **Арçын ача** салху / телейсĕр / хăйĕн сывлăш шарĕшĕн пăшăрханнă<br>**Арçын ача** йывăç çинче сывлăш шарне курчĕ | 0 1 |
| **А8.** | Тĕллев | **Арçын ача** шут тытрĕ/ хăйĕн сывлăш шарне каялла тавăрасшăн пулчĕ / шут тытрĕ | 0 1 |
| **А9.** | Хăтлану | **Арçын ача** сывлăш шарне сĕтĕрет/ туртать/ йывăç çинчен антарма хăтланать<br>**Арçын ача** сывлăш шарĕ хыççăн сикрĕ/ йывăç çине улăхать. | 0 1 |
| **А10.** | Ĕç мĕнле вĕçленсе пĕтни (результат) | **Ача** хăйĕн сывлăш шарикне каялла тавăрчĕ / сывлăш шарне çăлнă | 0 1 |
| **А11.** | ПК: реакци хаклани | **Арçын ача** хăйĕн сывлăш шарне каялла тавăрнишĕн савăнчĕ / телейлĕ / кăмăллă | 0 1 |
| *3-мĕш эпизод: Йытă (эпизод геройĕ: йытă)* | | | |

[6] Иккĕленнĕ чухне е ача хуравĕ протоколра кăтартнă хурав варианчĕ пек мар пулсан, акăлчан чĕлхипе çырнă инструкцине пăхăр.

[7] Ноль балл тĕрĕс мар хурав панăшăн е ответ çукшăн лартмалла, 1 балл кашни тĕрĕс хуравшăн памалла, 2 балл вăхăтпа вырăн асăннăшăн памалла.

| | | | |
|---|---|---|---|
| **А12.** | ПК: ĕçсем мĕнле пуçланса кайнине хаклани | **Йытă** кăлпасси курнă (сумкăра)<br>**Йытă** выçă / кăсăклă | 0 1 |
| **А13.** | Тĕллев | **Йытă** кăлпасси ярса тытасшăн / çисе ярасшăн/ вăрласшăн пулчĕ. | 0 1 |
| **А14.** | Хăтлану | **Йытă** кăлпасси ярса тытрĕ/туртать/илсе каять/ вăрлать<br>**Йытă** кăлпасси кăларать / сумкăран туртса кăларать / туртса кăларас тесе хăтланать | 0 1 |
| **А15.** | Ĕç мĕнле вĕçленсе пĕтни (результат) | **Йытă** кăлпасси çисе ярать | 0 1 |
| **А16.** | ПК: реакци хаклани | **Йытă** хавас/ телейлĕ / урăх выçă мар | 0 1 |
| **А17.** | | **Пĕтĕмĕшле балл:** | |

## В. Калав кăткăслăхне хаклани

| «Хăтлану + результат» модельпе каланă секвенцисен хисепĕ | Тĕллевсен шучĕ (хăтланупа результата шута илмесĕр) | «Тĕллев + хăтлану» тата «Тĕллев +результат» модельпе каланă секвенцисен хисепĕ | «Тĕллев + хăтлану + результат» модельпе каланă секвенцисен хисепĕ |
|---|---|---|---|
| В1. | В2. | В3. | В4. |
| | | | |

## С. Психикăлла лару-тăрăвне кăтартни (ПК)

| | |
|---|---|
| С1. | Пĕтĕмĕшле ПК (сăмах çаврăнăшĕсем). ПК йышне кĕреççĕ:<br>**Туйăмсене каласа кăтартни:** сăмахран, курать, илтет, туять, шăршлать;<br>**Физиологи тăрăмĕн терминĕсем**: сăмахран, ĕçес килет, выçă, ывăннă, ыратса кайнă, ыратать;<br>**Тăн-пуç çинчен каласа пани:** сăмахран, вăранать, çывăрасшăн, çывăрман тата ытти те;<br>**Туйăмсене ӳкерсе кăтартни**: тĕслĕхрен, салху, телейлĕ, савăнăçлă, çилĕллĕ, пăлханса ӳкнĕ, шанăçне çухатнă, хăранă, мăнаçлă, хăюллă, хĕпĕртенĕ, тĕлĕннĕ;<br>**Тăн-пуç ĕçне кăтартакан глаголсем**: тĕслĕхрен, шухăшлать, пĕлет, манать, йышăнать, ĕненет, хăйĕнчен ыйтать;<br>**Сăмах глаголĕсем**: тĕслĕхрен, калаçать, чĕнет, кăшкăрать, асăрхаттарать, ыйтать. |

## 2-мĕш пай: Ăнлану

| | | Тĕрĕс хурав тĕслĕхĕсем | Тĕрĕс мар хуравсен тĕслĕхĕсем | Балл |
|---|---|---|---|---|
| **0** | Çак истори сана килĕшрĕ-и? | **Шутланман ыйту, балл лартма кирлĕ мар** | | |
| **D1.** | Мĕншĕн йытă сикет / малалла сикет? *(1-2 ўкерчĕксем çине кăтартăр)* (1-мĕш эпизод: Тĕллев) | Шăши тытасшăн/ лĕпĕшпе вылясшăн | Чупасшăн/ сикесшĕн Йытăсем яланах сикеççĕ / чупаççĕ | 0 1 |
| **D2.** | Йытă хăйне мĕнле туять? (3 ўкерчĕк çине кăтартăр) (ПК: реакци хаклани) | Усал / япăх / кўренчĕк / ыратнине сисет / лайăх мар / кансĕр | Лайăх/ телейлĕ | 0 1 |
| **D3.** | *(Ача ăнлантарса памасăрах тĕрĕс хурав парать пулсан çеç D3 ыйтăр. Ача D2 ыйтăва тĕрĕс ăнлантарса панă пулсан, D3 графара ăна пĕр балл лартăр та D4 ыйту çине куçăр).* Мĕншĕн йытă хăйне япăх туять/ кўреннĕ/ тесе шутлатăн?[8] | Шăши тытма пултараймарĕ / вăл пуçĕпе йывăçа çапăнчĕ / Шăши чупса тарчĕ | Вырăнсăр хурав | 0 1 |
| **D4.** | Мĕншĕн ача сикет /çўлелле сикет? *(5-мĕш ўкерчĕк çине кăтартăр)* (2-мĕш эпизод: Тĕллев) | Сывлăш шарне тытасшăн / илесшĕн | Йывăç çине хăпарасшăн | 0 1 |
| **D5.** | Ача хăйне мĕнле туять? *(5-мĕш ўкерчĕк çине кăтартăр)* (ПК: реакци хаклани) | Аван/ телейлĕ / кăмăллă | Начар/ усал/ салху | 0 1 |
| **D6.** | *(Ача ăнлантарса памасăрах тĕрĕс хурав парсан кăна D6 ыйтăр. Ача D5 ыйтăва тĕрĕс ăнлантарса панă пулсан, D6 графара ăна пĕр балл лартăр та D7 ыйту çине куçăр).* Мĕншĕн ача хăйне лайăх / хавас/ кăмăллă туять тесе шутлатăн?[9] | Сывлăш шарне каялла илме / туртса антарма пултарнă | Вăл кулать / вăл тăрать / Урăх вырăнсăр хурав | 0 1 |
| **D7.** | Йытă мĕншĕн кăлпасси туртса кăларать? *(5-мĕш ўкерчĕк çине кăтартăр)* (3- мĕш эпизод: Тĕллев) | Ача пăхман чухне кăлпасси вăрлас шанспа усă курать / çиес килет / Шăши тытаймарĕ/ Йытăсем кăлпасси / аш (пĕтĕмĕшле пĕлтерĕш) юратаççĕ / | Сумкăпа выляс килет | 0 1 |

8 D3 ыйту панă чухне D2 хуравланă сăмах çаврăнăшĕсемпе усă курăр.
9 D6 ыйту панă чухне D5 хуравланă сăмах çаврăнăшĕсемпе усă курăр.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | Кӑлпасси тутлӑ | | |
| **D8.** | Калӑпӑр, ача йытта курать. Ача хӑйне мӗнле туять? *(6-мӗш ӳкерчӗк ҫине кӑтартӑр)* (ПК: реакци хаклани) | Начар / усал / салху | Аван / телейлӗ / кӑмӑллӑ / савӑнать | 0 1 |
| **D9.** | *(Ача ӑнлантарса памасӑр тӗрӗс хурав парать пулсан ҫеҫ D9 ыйтӑр. Ачи D8 ыйтӑва тӗрӗс ӑнлантарса панӑ пулсан, D9 графра ӑна пӗр балл лартӑр та D10 ыйту ҫине куҫӑр).* Мӗншӗн эсӗ ача хӑйне япӑх туять тесе шутлатӑн?[10] | Йытӑ унӑн кӑлпассине ҫисе янӑ/ Ача хӑй кӑлпассине ҫисе ярасшӑн пулнӑ / Ку ача кӑлпасси пулнӑ | Вырӑнсӑр хурав | 0 1 |
| **D10.** | Ача йытӑпа туслашӗ-ши? Мӗншӗн? | Ҫук (пӗр сӑлтавне те пулин кӑтартӑр: тӗслӗхрен, йытӑ кӑлпассине ҫисе янӑ е кӑлпасси вӑрланӑ) Ытти майлӑ хурав | Ҫапла / Эпӗ пӗлместӗп / Урӑх вырӑнсӑр хурав | 0 1 |
| **D11.** | | | **Пӗтӗмӗшле балл:** | |

[10] D8 ыйту панӑ чухне D7 хуравланӑ сӑмах ҫаврӑнӑшӗсемпе усӑ курӑр.

**«Кайăк чĕпписем» калав протоколĕ**

Калав тумалли / Каласа памалли / Тĕслĕхлĕ калав

Ача ячĕ: ____________________________

Çуралнă кун: ____________________________

Тестланă кун: ____________________________

Тестланă ача çулĕ (уйăхсемпе кăтартмалла): ____________________________

Арлăх: ____________________________

Тĕрĕслевçĕ ячĕ: ____________________________

2-мĕш чĕлхепе çыхăну (контакт)

вăрăмăшĕ (уйăхсемпе кăтартмалла): ____________________________

Шкулчченхи ача-пăча учреждениине кĕнĕ кун: ____________________________

Шкулчченхи ача-пăча учреждени ячĕ: ____________________________

Материалсене малтанах хатĕрлесе хумалла: диктофон, конвертсем (ăшĕнче ӳкерчĕксем). Тест пуçланиччен вĕсем сĕтел çинче выртмалла. Диктофон çине çырса илме хатĕрленӳ пайĕнченех пуçламалла та тест вĕçлениччченех çырмалла.

**Хатĕрленӳ пайĕ**
Ачапа контакт тупăр. Унпала тĕрлĕ темăпа калаçма пултаратăр. Тĕслĕхрен: «Санăн чи лайăх юлташ кам? Эсĕ телевизор курма юрататăн-и? Сана историсем каласа пама килĕшет-и? Сана историсем итлеме килĕшет-и?»

**Инструкцисем**

**Калав тумалли**

Ачана хирĕç ларăр. Ăна çапла калăр: «*Пăх-ха, сан умăнта 3 конверт выртать. Кашни конвертра пĕрер интереслĕ ӳкерчĕклĕ истории пур. Хăвна килĕшекен конверта суйласа ил, унтан мана историне каласа паратăн. Ун хыççăн эпе сана ыйтусем паратăп»*. Ача конверта суйласа илсен ăна конвертран ӳкерчĕксене кăларма пулăшăр, анчах та ӳкерчĕксен йĕркине ачан кăна курмалла. Халĕ ачана çапла калăр: *«Тимлĕ пăх ӳкерчĕксене, мана вара ан кăтарт. Эсĕ кăна пăхма пултаратăн. Эсĕ хатĕр-и?»*

Унтан ӳкерчĕксене майласа хумалла та 1-2 ӳкерчĕксене уçмалла. (Ачан кăна курмалла). Ачана: *«Каласа пар-ха мана ӳкерчĕксен историне. Эсĕ мана чи лайăх истори каласа пама тăрăш». Ачан каласа парас кăмăлĕ çук пулсан ăна хавхалантарăр. Ӳкерчĕк çине кăтартса: «Каласа пар-ха ӳкерчĕкри историне»,* - тейĕр. Ача 1-2 ӳкерчĕк тăрăх каласа панă хыççăн 3-4 (1-4 ӳкерчĕксем пурте курăнмалла), унтан 5-6 ӳкерчĕксене кăтартăр. (Халĕ 1-6 ӳкерчĕксем пурте курăнмалла). Ӳкерчĕксене ачан кăна курмалли çинчен манмалла мар. Каласа панă çĕртех ача шăплансан ăна: *«Малалла. Ытларах каласа пар-ха. Тата мĕн пулса иртет-ха ӳкерчĕкре».*

Ача пĕтĕмпех каласа петерсен ăна мухтамалли çинчен ан манăр. Ун хыççăн ыйтусем пама юрать.

**Каласа памалли**

*Ачана хирĕç ларăр. Ăна çапла калăр: «Пăх-ха, сан умăнта 3 конверт выртать. Кашни конвертра пĕрер интереслĕ ӳкерчĕклĕ истории пур. Хăвна килĕшекен*

*конверта суйласа ил, унтан эпĕ сана истори каласа паратăп». Ача конверта суйласа илсен унтан ӳкерчĕклĕ историсене кăларăр та ача умне хурăр. (Ӳкерчĕксен йĕркине ачан кăна курмалла). Халĕ ачана çапла калăр: «Тимлĕ пăх ӳкерчĕксене, мана вара ан кăтарт. Эсĕ кăна пăхма пултаратан. Эсĕ хатĕр-и? Халĕ эпĕ сана истории каласа паратăп. Эсĕ тимлĕ итле, вара мана каласа паратан. Ун хыççăн эпĕ сана темиçе ыйту паратăп». Ӳкерчĕксене майласа хурăр та 1-2 ӳкерчĕксене уçăр. Ӳкерчĕксене ачан кăна курмалла. Пĕрремĕш ӳкерчĕк çине кăтартăр та çапла калăр: «Çакăнтан пуçланать истори».*

*Пĕррехинче кайăк амăшĕ хăйĕн йăвари чĕпписем выçă пулнине асăрхарĕ. Вăл вĕсем валли апат тупас тесе йăваран вĕçсе тухрĕ. Выçă кушак кайăк амăшĕ йăваран вĕçсе кайнине асăрхарĕ те çапла шухăшларĕ: "Питĕ аван, кама йăвара куратăп-ха эпĕ?"*

